Уяв умĕнхи интервью

# Пурнăç пуçламăшĕ те, илемĕ те, шанăçĕ те санрах...

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Паян ырми-канми ĕçлекенсене те чунтанах тав тăвас килет. Маттур та пултаруллă хĕрарăмсем кашни отрасльтех пур. Пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтаракансенех илер-ха. «Герой» тата «Оринино» хуçалăхсен тĕп агрономĕсене Зоя Яковлевна Макаровăна, Ирина Васильевна Блиновăна, «Оринино» тата «Ударник» хуçалăхсен бригадирĕсене Алевтина Артемьевна Кочановăна, Светлана Петровна Максимовăна çĕр ĕçĕнче тăрăшуллă пулнăшăн тав тăвас килет.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те тăрăшулăхпа палăрса тăраççĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхри Надежда Николаевна Орловапа Надежда Валентиновна Михайлова, «Ударник» хуçалăхри Зоя Степановна Андреева дояркăсем иртнĕ çул кашни ĕнерен вăтамран 6 пин килограмм ытла сĕт суса илчĕç. Çавăн пекех Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна пăхакан Алина Валерьяновна Филипповапа Наталия Зосимовна Михайлова, «Свобода» хуçалăхри сысна пăхакан (çурасем илессипе) Елена Захаровна Тихомирова, «Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерлă уçă обществăри чăхсене пăхакан Любовь Геннадьевна Перкова, кунта ĕçлекен Екатерина Николаевна Колесникова тата ыттисем районта ырă ят çĕнсе илнĕ. Хăйсен профессине суйласа илнисенчен чи лайăххисен шутне иртнĕ çул Любовь Федоровна Морозова сысна пăхакан («Оринино»), Валентина Александровна Федотова пăру пăхакан («Ударник»), Юлия Николаевна Тимофеева зоотехник-селекционер («Ударник»), Валентина Алексеевна Леонтьева техник-осеменатор («Герой»), Ираида Хрисановна Михайлова тĕп ветеринари врачĕ (Суворов яч. хис.) те кĕчĕç. Çавăн пекех ĕмĕрĕпех фермăра ĕçлекен Валентина Германовна Трофимовапа Зоя Ивановна Михайлова («Ударник»), Зинаида Михайловна Семенова (Ильич яч. хис.) дояркăсене маттур пулнăшăн тав тăвас килет. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Галина Николаевна Александрован килти хушма хуçалăхĕ те – ял çыннисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче.

Промышленноçра вăй хуракансенчен «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерлă уçă обществăри производство цехĕн аслă мастерне Нина Васильевна Поповăна, «Моргаушимежрайгаз» филиалта вăй хуракан юсавпа строительство, монтаж ĕçĕсен участокĕн мастерне Валентина Алексеевна Спиридоновăна та ырă сăмахсемпе асăнмасăр иртме çук.

Суту-илӳ сферинче те ытларах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Муркаш райповĕн магазинĕн заведующийĕсем Зоя Римовна Потапова (Муркаш), Ольга Борисовна Семенова (Çуткӳл), Мăн Сĕнтĕр райповĕн магазинĕн заведующийĕ Римма Николаевна Иванова, Светлана Альбертовна Петрова аслă повар, Тамара Петровна Мерлова хатĕрлевçĕ, магазин заведующийĕ Светлана Михайловна Белова, чăннипех те, чыса тăрăшуллă ĕçпе çĕнсе илнĕ.

Районти предпринимательсем те пуçарулăхпа палăрса тăраççĕ. «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Инга Петровна Терентьева, Инна Вячеславовна Чернова фермер районти конкурсра мала тухрĕç, республикăри конкурсран та лайăх кăтартусемпе таврăнчĕç.

«Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» муниципаллă унитарлă предприятире ĕçлекен котельнăй операторĕ Римма Семеновна Трофимова, Муркашри почтамтăн почтальонкисем Вера Вениаминовна Судеевапа Вера Андреевна Николаева тата ыттисем коллективра хисепре.

Учительсенчен иртнĕ çул Татьяна Владимировна Ермакова (Юнкă), Елена Николаевна Ефанова (Муркаш), Валентина Ивановна Алексеева (Оринин) чи пултаруллă учительсене укçан паракан хавхалантарăва – 100 пин тенке тивĕçрĕç.

Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тимлекенсене тата епле асăнмасăр хăварăн. Нина Артемьевна Лобачева акушер-гинеколога, Зоя Алексеевна Андреева педиатра, терапи уйрăмĕн заведующине Инна Федоровна Королькована, ача-пăча уйрăмĕн заведующине Светлана Петровна Васильевана, Ирина Семеновна Данилова участокри терапевта, УЗИ пăхакан Элла Михайловна Куликова врача, Валентина Юрьевна Евдокимова поликлиника медсестрине районта палламан çын çук та пулĕ.

Ал ĕç тума пĕлмен хĕрарăм е хĕрача пур-ши тата? Эпир илемлĕ ӳкерчĕксене шăрçапа тĕрлекен Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Елена Анатольевна Николаеван, çемçе теттесем çĕлекен Ярославка ял тăрăхĕнчи Маргарита Николаевна Пушкареван, Шомикра пурăнакан чăваш тĕррине тĕрлекен Марина Валерьяновна Филиппован ĕçĕсемпе яланах кăсăкланса паллашатпăр, вĕсем республикăри конкурссенче те малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Культура сферинче те ĕçре маттуррисем сахал мар. Надежда Изосимовна Егорова (Муркаш), Роза Петровна Николаева (Кашмаш), Раиса Павловна Аксендарова (Çурлатри), Тамара Тимофеевна Вострейкина, Надежда Максимильяновна Кондукторова (Калайкасси) ертсе пыракан Культура çурчĕсемпе клубсенче интереслĕ мероприятисем нумай иртеççĕ, пултарулăх ушкăнĕсем вăй илсе пыраççĕ. Татьяна Николаевна Ефимова (Мăн Сĕнтĕр), Анжелика Васильевна Угарова (Катькас), Татьяна Зиновьевна Степанова (Уйкас Янасал) халăха хаçат-журналпа, информаципе тивĕçтереççĕ.

**– Алевтина Евстафьевна, хĕрарăм-ертӳçĕсен списокне татах та тăсма пулать пулĕ.**

– Çаплах. Кашни сферăрах коллектива ертсе пыракан хĕрарăмсем нумай. Эльза Леонидовна Тарасова ертсе пыракан район сучĕ республикăра ырă ятлисен шутĕнче. Людмила Петровна Майкова ертсе пыракан Мăн Сĕнтĕр райпо коллективĕ çулсеренех республикăра çеç мар, Раççей шайĕнче малти вырăнсене йышăнать. Муркаш райповĕ çинчен те çавнах каламалла. Унта райпо Канашĕн ертӳçин çумне Роза Владимировна Скворцована, «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçине Елена Кузьминична Васильевана, çавăн пекех пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăри Лилия Валерьевна Николаевана («Визит»), Альбина Александровна Никитинана («Никита»), Муркашри почтамт ертӳçине Нина Игнатьевна Правдинана ырăпа асăнмалла.

Чуманкасси тата Хорнуй ял тăрăхĕсен ертӳçисем Людмила Германовна Ковалевапа Валентина Алексеевна Любимова та халăхпа пĕр чĕлхе тупма, çынсене пĕр чăмăра пуçтарса ĕçе йĕркелеме пĕлнипе палăрса тăраççĕ.

2010 çул Учительсен çулталăкĕ пулнă май çак пархатарлă профессие суйласа илнисен коллективĕсене ертсе пыракансене уйрăмах палăртса хăварас килет: Вера Федоровна Ильина (Ильинка), Алла Андреевна Калинкина (Нискасси), Светлана Вениаминовна Троицкая (Шурча), Ирина Петровна Федотова (Сосновка), Галина Павловна Ершова (Кашмаш), Антонина Владимировна Степанова (Шетмĕпуç), Любовь Петровна Сергеева (Катькасри пуçламăш шкул-сад), Галина Леонидовна Пегасова (Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-сад), Татьяна Михайловна Майорова (Шомик) директорсем хăйсен ĕçĕшĕн çунса тăраççĕ. Е тата ача сачĕсен заведующийĕсене илер: Галина Александровна Шолкова («Мечта»), Надежда Гурьевна Колбасова («Солнышко», Александра Алексеевна Филимонова («Колокольчик») коллективра та, ачасен ашшĕ-амăшĕсен умĕнче те ырă ятлă.

**– Хĕрарăмсем обществăлла ĕçрен те пăрăнмаççĕ вĕт?**

– Çапла, чун ăшшипе тăрăшулăх çемье валли те, ялти пурнăçа интереслĕрех тума та çитет вĕсен, пултарулăх ушкăнĕсене те çӳреççĕ вĕсем. Кирек епле мероприятинче те чи пуçаруллисемпе чи хастаррисем хушшинче – каллех хĕрарăмсем. Кунта ман паян вырăнсенчи хĕрарăмсен Канашĕсене ертсе пыракансене те тав сăмахĕ калас килет. Мĕнле кăна ĕç йĕркелесе иртермеççĕ пулĕ вĕсем. Ял тăрăхĕнчи çемьесемпе ĕçлекен комиссипе пĕрле ăнăçсăр çемьесене те çитеççĕ. Культура, спорт мероприятийĕсене хатĕрленсе ирттереççĕ. Уйрăмах пултаруллисене ятранах асăнас килет: Валентина Васильевна Краснова (Мăн Сĕнтĕр), Светлана Васильевна Федорова (Çатракасси), Зоя Ивановна Иванова (Чуманкасси), Людмила Васильевна Семенова (Ильинка), Валентина Владимировна Никитина (Шетмĕпуç) тата ыттисем.

**– Хĕрарăмсене хумхантаракан ыйтусем те çук мар паян. Кун пирки мĕн шулатăр?**

– Чи малтанах ĕçсĕрлĕх проблеми хумхантарать хĕрарăмсене. Вырăнта ĕç вырăнĕсем сахалтарах пирки арçынсем ытларах аякка кайса ĕçлесе килеççĕ. Çемьери ачасем ашшĕне килте сайра кураççĕ. Çакă воспитани ыйтăвĕ çине вăйлă витĕм кӳрет. Çемье арканасси патне те илсе пыма пултарать.

Тепĕр йывăр ыйту вăл – çынсем эрех ытларах ĕçме пуçлани. Çав усал шĕвек енне туртăнакансем хушшинче, шел пулин те, хĕрарăмсем те пур. Çавна май ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех ачасем вĕсен ăшшине, юратăвне туяймаççĕ. Вĕсем тӳрĕ çултан пăрăнас хăрушлăх та тухса тăрать. Районти çул çитмен ачасемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссинче кăна çул çитмен 62 ача учетра тăрать. Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламан 26 çемьене те учета илнĕ. Апла пулсан ку ыйтупа тата та тăрăшарах ĕçлемелле-ха пирĕн. Кашни амăшĕ хăйĕн ачисемшĕн чи хаклă çын пулнине, унăн шăпишĕн яваплă пулнине туйса тăтăр. Пĕр ялта пурăнакансен инкеке лекнĕ çынсенчен пăрăнса иртмелле мар пирĕн, май килнĕ таран пулăшма тăрăшмалла. Ачасене инкекре хăварас марччĕ.

Пирĕн, хĕрарăмсен, çемьери лару-тăру мĕнле пуласси пирĕнтен нумай килнине самантлăха та манма юрамасть. Хĕрарăм йывăр самантра мăшăрне пулăшса хавхалантарса тăраканĕ те, ачисемшĕн пурнăç çулне кăтартса пыраканĕ те, ĕçре тата обществăра пуçаруçă та, пурнăç тыткăчи тата илемĕ те.

Сăмаха вĕçленĕ май вара аннесемпе асаннесен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ каласа хăварас килет. Кăçал Учительсен çулталăкĕ пулнă май пирĕн, ача амăшĕсен, хамăр ачасемшĕн, мăнуксемшĕн эпир чи пĕрремĕш учителĕ, вĕрентекенĕ пулнине те манмалла мар. Хамăрăн ачасене тăван çĕре, Тăван çĕршыва, çынсене юратма вĕрентмелле, вĕсене ĕçе хăнăхтарса ӳстермелле. Ачан пурнăç çулĕ çемьерен пуçланни çинчен пĕр самантлăха та манма юрамасть пирĕн.

Хисеплĕ хĕрарăмсем! Сире пурне те уяв ячĕпе чунтан саламлатăп. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатăп. Ĕçри çитĕнӳсем хавхалантарса пычăр, çемьере яланах килĕшӳпе ăнлану пултăр, сывăх çынсен юратăвĕ пурнăçăра илемлеттĕр, ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр, сăнпитĕртен йăл кулă пĕрре те ан сухалтăр.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Мартăн 8-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

# Ăшă сăмах темĕнрен те хаклă

«Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалланă уявсем районăн кашни ял тăрăхĕнчех çакăн пек савăнăçлă та массăллă иртмелле», – терĕ район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, кĕçнерни кунхи уява вĕçлесе. Çак кун, мартăн 4-мĕшĕнче, районăн пур кĕтесĕнчен те пултаруллă та хастар хĕрарăмсене Муркаша, уява халалланă çавра сĕтел хушшине йыхравларĕç.

Тĕрлĕ ĕçре ĕçлекен маттур хĕрарăмсене ятран асăнчĕç, Тав çырăвĕсем парса чысларĕç уявра. Ăшă салам сăмахĕсем каласа парнеленĕ тутăрсем кашни хĕрарăмăн хул пуççийĕ çинчех илемлĕн курăнчĕç: маляр-и вăл е шкул директорĕ. Тепĕр тесен, чăваш хĕрарăмĕн сăнне тутăр хăçан пăснă-ха?

Хĕрарăмсене Муркаш район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, «Сундырь–Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Л.Г. Ильгечкин (тутлă пылак çимĕçпе те сăйларĕ, илемлĕ юрă та парнелерĕ), Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламланипе пĕрлех пĕр кун маларах «Муркаш пики – 2010» конкурсра çĕнтернĕ Татьяна Андреева та салам сăмахĕ каласа ташă парнелерĕ (сăн ӳкерчĕкре). Уява паллă юрăç И. Христофоров хутшăнни те пухăннисемшĕн парне вырăнне пулчĕ.

Хĕрарăмсем чуна уçсах калаçма пултарчĕç уяв кĕрекинче: хĕрарăмăн пурнăçĕнче татса памалли ыйтусем те нумай енлĕ-çке. Темĕнле йывăр ĕç те тума тивет унăн, çĕр çинче пурнăç пуçланнăранпах юрату, çемье ăшшин



символĕ пулса тăраканăн. Арçынсен енчен тимлĕх пулни, Шомик шкул директорĕ Т. Майорова каланă пек, «хĕрарăма вĕçме май парать». «Вĕçекен» хĕрарăм вара темĕнле ĕçе те пурнăçлайрать. Тепĕр чухне арçын каланă ăшă сăмах темĕнрен те хаклă.

Апла пулсан, арçынсен хĕрарăмсене çунат хушма майсем ытларах туса парасчĕ. «Картина» вокалпа инструментсен ансаблĕнчи арçынсем пек. Вĕсем уявра кашни хĕрарăмах мăшăр çунат парнелерĕç тейĕн. Юрăсемпе киленсе залра ларакансем ташламасăр чăтаймарĕç. Хыççăн вара савăк кăмăлпа, çĕнĕ вăй-хăватпа çак савăнăçа хăйсен килĕсене, ĕç вырăнĕсене илсе кайрĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕçре тăрăшуллисем

# Аллисем ылтăн пулĕ

Муркашри йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртри илемлĕх салонĕнче пулма тӳр килнĕччĕ. Питĕ килĕшрĕ мана кунта. Салонра ĕçлекенсем клиентсене ăшшăн кĕтсе илеççĕ, хăйсен ĕçне пĕлсе тата пахалăхлă пурнăçлаççĕ, тараватлă. Кунта тасалăхпа йĕркелĕх хуçаланать. Çавна май салонра вăй хуракан Марина Георгиевна Шатровапа Татьяна Виссарионовна Антонована малашне те ĕçре ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунас килет.

**Т. ПЕТРОВА.**

Москакасси ялĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

# Аннесен уявĕ

Çуркунне çитет,
Çуркунне çитет.
Аннесен уявĕ
Çывхарса килет.

Вĕренетпĕр юрăсем
Илемлисене,
Хатĕрлетпĕр парнесем
Чи чаплисене.

Чун юратнă аннесем –
Ылтăнран та хаклисем.
Сире валли пирĕнтен
Уяв парнисем.

**В. СЕЛЮШКИНА.**

Юнкă ялĕ.

Пресс-информаци

# Хĕрарăмсен статистики

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ – гендерлă статистика даннăйĕсемпе паллаштармалли, пирĕн пĕтĕм хĕрарăмсене, çавăн пекех Чăваш Енре пурăнакан кашни хĕрарăма саламламалли сăлтав. Кунпа пĕрлех шутласа пăхар: мĕнлеха вĕсем – пĕтĕм этемлĕхĕн чи лайăх пайĕ?

Халăх çыравĕ юлашки хут 2002 çулта пулнăччĕ. Ун чухне пирĕн республикăра 705 пин хĕрарăм шутланнă. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх, 2009 çул пуçланнă тĕле республикăра вĕçĕм пурăнакансем пĕтĕмпе 1279,4 пин çын пулнă пулсан, вăл шутран 591,2 пин (46,2 процент) арçын тата 682,2 пин (53,8 процент) хĕрарăм. Кашни 1000 хĕрарăм пуçне республикăра 859 арçын тивет.

Иртнĕ çулталăк пуçламăшĕнче хĕрарăмсем республикăра арçынсенчен 97 пин çын нумайрах шутланнă, вăл шутран 70 çултан аслăраххисем 51,1 пин çын чухлĕ е 2,5 хут нумайрах.

Арçын ачасем нумайрах çураласçĕ. 2002 – 2008 çулсенче республикăра çулсерен вăтамран 360 арçын ача нумайрах çуралнă.

Статистика даннăйĕсемпе килĕшӳллĕн 2008 çулта 9325 çемье чăмăртаннă пулсан, 2009 çулта – 9027 çемье çеç. Çав вăхăтрах арканнă çемьесен шучĕ ӳснĕ, 4786-ран 5053-не çитнĕ. Иртнĕ çул арканнă 2073 çемьере пĕр ача та пулман, 2980 çемьере 3681 ача шутланнă.

35 çул урлă каçнă хыççăн хĕрарăмсем лайăхрах сыхланса юлаççĕ тата арçынсенчен ытларах пурăнаççĕ. Уйрăмах пенси çулне çитеспе çакă аван палăрать. 60 çул урлă каçнă хĕрарăмсем арçынсенчен 2 хут, 70 урлă каçнисем 2,5 хут нумайрах. 100 çула çитекенсем хушшинче те ытларах хĕрарăмсем.

Пĕтĕмĕшле мĕнле ӳкерчĕк тухса тăрать-ха? Хĕрарăмсем вăтамран 40,36 çулта, арçынсем – 35,65 çулта. Пĕтĕмĕшле илсен, çак вăхăта хĕрарăмсен пĕрер ача пур. Анчах та çемьен вăтам йышĕ чаксах пырать. 2002 çулта шута илнĕ çемьесенчен виçĕ пайĕнчен пĕринче çемье членĕсем икĕ çынран ытла пулман. Çапах та республикипе кашни çемье пуçне пĕр ачана яхăн тивет.

Хĕрарăмсем хушшинче ятарлă вăтам тата аслă пĕлӳ илнисен шучĕ ӳсет. Вĕсем ытларах вĕрентӳ ĕçĕнче, социаллă сферăра вăй хураççĕ.

Çавăн пек вĕсем пирĕн хĕрарăмсем: ăслă-тăнлă, пултаруллă, хăйсене ĕçре кăтартма пултараççĕ. Хăйсен тĕп ĕçне пурнăçланипех обществăлла проблемăсене татса пама та активлă хутшăнаççĕ. Октябрĕн 14 – 25-мĕшĕсенче Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне йĕркеллĕ ирттересси те вĕсен тăрăшулăхĕнчен нумай килет. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламланă май вĕсене ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**З. ВИНОГРАДОВА, Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.**